Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

88 (8049) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕн 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Вĕсен тĕллевĕ – вăхăтра пулăшасси

*Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре РФ Перекет банкĕн Чăваш уйрăмĕн Муркашри хушма офисĕн çамрăк ĕçченĕсене куратăр. Анастасия Замкова, Алексей Шариков, Елена Блинова (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла) çамрăксем ятарлă вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн Перекет банкĕн хушма офисĕнче консультантсем пулса ĕçлеççĕ. Çав хушăрах Настьăпа Лена куçăмсăр майпа аслă пĕлӳ илессипе те тимлеççĕ. Офис ертӳçи Ю. Иванов кĕске калаçура вĕсен ĕçĕпе кăмăллă пулнине палăртрĕ. «Ял çыннисен ыйтăвĕсене перекет банкĕн услугисемпе туллин тивĕçтерсе вĕсене аталану çулĕнче тĕкĕ парасси – пирĕн тĕллев», – терĕç çамрăксем Перекет банкне ялта пурăнакансем йышлăн çӳренине палăртса.*

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Район çыннисемпе тачă çыхăнура



## Хушăнакан пенсие илеççĕ

Пенси ыйтăвĕсемпе

Пенсин хушăнакан пайне тӳлесси пирки саккун вăя кĕнĕренпе çавна валли Чăваш Енре 38 миллион тенкĕ уйăрнă. Çак суммăна 5,7 пин пенсионер тивĕçнĕ.

Пĕтĕмпе вара республикипе 9,5 пин çын валли пенсин хушăнакан пайне палăртнă. Ытларахăшне палăртнă суммăна пĕр хутпа тӳлеççĕ. Пĕр хут паракан суммăна граждансене укçа-тенкĕ куçнă май, анчах та тӳлев суммине палăртнăранпа икĕ уйăхран кая юлмасăр тӳлесе татаççĕ. Гражданин укçа-тенкĕне банк урлă е почтăпа илессине хăй суйласа илет.

Пенсин пухăнакан пайне тата срокла пенси тӳлевне илесси пирки çырнă заявленисене 10 кун хушшинче пăхса тухаççĕ, тӳлеве ĕç пенсийĕн страхланă пайĕпе пĕрле параççĕ. Республикипе пĕтĕмĕшле срокла пенси тӳлевне 6 пенсионера шутласа пана, Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленийĕ тăрăх – 1 çынна, ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне – 3 пенсионера.

Чăваш Республики тăрăх пĕр хут паракан тӳлевĕн вăтам виçи 6508 тенкĕпе танлашнă, Муркаш районĕпе – 9620 тенкĕпе.

Аса илтеретпĕр: пенсин пухăнакан пайĕ йĕркеленекен граждансем ватлăха пула е вăхăтран маларах пенсие тухаççĕ пулсан пенсин пухăнакан пайне илесси пирки пыма пултараççĕ. Енчен те гражданинăн пенсийĕ Раççей Пенси фондĕнче йĕркеленет пулсан, унăн заявление пурăнакан вырăнти управление памалла. Патшалăхăн шутланман пенси фондĕнче йĕркеленнĕ чухне вара унта заявленипе пырас пулать.

**Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

## Нумай ачаллисене – çĕр лаптăкĕ

Указа вăя кĕртсе

***Патшалăх нумай ачаллă çемьесене май пур таран пулăшать: хушма тӳлевсем вăя кĕртет, çĕр лаптăкĕпе тивĕçтерет тата ытти те. Иртнĕ çулхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче «Чăваш Республикинчи нумай ачаллă çемьесене пулăшмалли хушма мерăсем çинчен» Указ вăя кĕчĕ. Çакăнпа килĕшӳллĕн виçĕ тата ытларах ачаллă çемьесем валли кил-çурт, тĕрлĕ хуралтă çĕклеме çĕр тӳлевсĕр уйăраççĕ. Паллах, çемьешĕн ку пысăк пулăшу, енчен те ăна меллĕ вырăнта тата вăхăтра параççĕ пулсан. Çĕр лаптăкĕпе тивĕçтерессi вара ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем епле ĕçленинчен чылай килет. Ку тĕлĕшри ĕç-хĕлпе паллаштарма эпĕ район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçинчен И. ЗАХАРОВРАН ыйтрăм.***

– Паянхи кун тĕлне учетра çĕр лаптăкĕ илес текен 40 çемье тăрать. Халĕ ку ыйтăва йĕркене кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлетпĕр. Паянхи кун тĕлне 21 çемье çĕр лаптăкĕллĕ пулчĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ унта пурăнмалли çурт-йĕр çĕклес шухăшлă, теприсем хушма хуçалăх аталантарасшăн. Çĕр лаптăкĕсене уйăрнă чухне ял çывăхнерех е ялăн аталану перспективи пур вырăнсене суйламалла.

Çавăн пекех нумай ачаллă çемьесене çитес вăхăтра тивĕçтерме 42 лаптăкăн документчĕсене хатĕрлесе çитернĕ, 46-не вĕçлеймен-ха. Çитес вăхăтра вĕсене те йĕркелесе çитеретпĕр. Çавна май Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указне туллин пурнăçлассинче чăрмав пулмалла мар.

**– Кашни ял тăрăхĕпе уйăрммăн илер-ха, сентябрь уйăхĕнчипе танлаштарсан еплерех лару-тăру ума тухать?**

– Ку тĕлĕшри ĕç-хĕл çапларах улшăнса пычĕ. Сентябрьте Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче 1 çемье черетре тăнă. Халĕ документсем йĕркелесе çитернĕ, çĕрпе тивĕçтернĕ. Çавăн пекех çитес вăхăт валли тепĕр лаптăк тĕлĕшпе документ хатĕрленĕ. Мăн Сĕнтĕрсен черетĕнче вара 7-ĕн пулнă. Паянхи кун тĕлне черетре 2 çемье тăрать, ыттисен ыйтăвне тивĕçтернĕ, 11 лаптăк хатĕрлесе çитернĕ. Ильинка ял тăрăхĕнче черетре 3-ĕн пулнă, халĕ те çаплах. Катькас ял тăрăхĕнче 9 çемье çĕр ыйтса заявлени çырнă. Паян кунта черет чакман-ха. 21 лаптăк тĕлĕшпе документсем хатĕрлес тапхăр пырать. Çитес вăхăтра ку ыйту уçăмланмалла. Муркаш ял тăрăхĕнче 11 çемье черетре пулнă, паянхи кун тĕлне – 6-ăн. Çавăн пекех 6 лаптăк валли документсем йĕркелеççĕ. Турай ял тăрăхĕнче черете тăнă çемье çук, апла пулин те вĕсем 1 лаптăк тĕлĕшпе документсем хатĕрлесе çитернĕ. Шетмĕпуç ял тăрăхĕ 1 çемье ыйтăвне тивĕçтернĕ, паянхи кун тĕлне черете тăнисем çук, пĕр лаптăк тĕлĕшпе документ хатĕрленĕ. Çатракасси ял тăрăхĕнче ку таранччен çĕр илме кăмăл пуррине палăртман, çĕрне те хатĕрлемен. Орининсем те ку тĕлĕшпе заявлени çырман, апла пулин те 2 лаптăк тĕлĕшпе документ янтăланă. Юнкă ял тăрăхĕнче те çавăн пекех тимлеççĕ. Чуманкасси ял тăрăхĕнче черетре 4 çемье пулнă, 2-шĕн ыйтăвне тивĕçтернĕ, çитес вăхăт валли 4 лаптăк хатĕрленĕ. Ярапайкасси ял тăрăхĕнче вара 7 çемье тахçанах асăннă çăмăллăхпа усă курасшăн. Халĕ кунта 10 лаптăк тĕлĕшпе документсем хатĕрлеççĕ. Хорнуй ял тăрăхĕнче 4 çемье çĕр ыйтса заявлени çырнă, черетре 3-ĕн, 8 лаптăк тĕлĕшпе документсем йĕркелесси пырать. Йӳçкасси тавращĕнче нумай ачаллă 2 çемье çĕр илесшĕн. Халĕ 19 лаптăк йĕркелессипе ĕçлеççĕ. Москакасси ял тăрăхĕнче черетре 5 çемье тăрать, 4 лаптăк хатĕрлеççĕ. Ярославкăсем çитес вăхăтра нумай ачаллă 2 çемье ыйтăвне тивĕçтерме шантараççĕ, черетре вара 1 çемье тăрать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

## Çырăва мĕн кĕртме сĕнетĕр?

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх Канашне çулсеренех яракан Çырăва хатĕрлеме пуçланă. Пысăк пĕлтерĕшлĕ çак документра вăл Правительствăн, Патшалăх Канашĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, предприяти-организацисен ĕçĕн кĕске тата нумай вăхăтлăх стратегийĕн программине йĕркелемешкĕн çитĕнӳсемпе пĕрлех çивĕч ыйтусене те палăртĕ. Çырăва хатĕрленĕ чухне Чăваш Ен Пуçлăхĕ республика халăхĕн, общество организацийĕсен тата граждан обществин ытти институчĕн представителĕсен шухăш-кăмăлне те шута илĕ.

Çынсен пурнăç шайĕн пахалăхне ӳстерес тесен пирĕн пĕрле мĕнле тĕллевсем палăртмалла? Чăваш Ен Пуçлăхĕн мĕнле темăсене тĕплĕнрех тишкермелле? 2013 çулхи Çырăва эсир мĕн кĕртме сĕнетĕр? Сирĕн шухăшăрпа, республика халăхĕн пурнăçне мĕн лайăхрах тата хăтлăрах тăвĕ?

**Сĕнӳсене çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10 çурт; e-mail: pres0@cap.ru. «Çырăва хатĕрлеме» тесе палăртмалла.**

Савăнăçлă пуху

## Ял хуçалăх çулталăкĕн итогĕсене пĕтĕмлетĕç

Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ В. Ананьев Ял хуçалăхĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунне халалланă савăнăçлă пухăва хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕн черетлĕ ларăвне ирттернĕ. Асăннă мероприяти ноябрĕн 16-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче (ял тăрăхĕсем хушшинчи информаципе кану центрĕнче) иртет.

Савăнăçлă пухура ял ĕçченĕсем кăçалхи 10 уйăхри экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетеççĕ, ĕçре мала тухнисене чысласçĕ.

Уява ял хуçалăх отраслĕн ветеранĕсене те йыхравлаççĕ. Пуху пуçланиччен вĕсем «Путь Ильича» агрофирмăра пулса курма палăртаççĕ.

Пухăва ял хуçалăх предприятийĕсен делегацийĕсемпе пĕрлех ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те хутшăнĕç. Районти продукци тирпейлекен промышленноç предприятийĕсем хăйсен продукцине туянма сĕнĕç.

Паллă ĕнтĕ, уяв программи ташă-юрăран пуян пулĕ. Пухăннисене художество пултарулăх коллективĕсем, чăваш эстрада артисчĕсем савăнăç кӳрĕç.

Конкурс

## Хăшĕ чи тивĕçли?

Район администрацийĕ «Чăваш Республикин Муркаш районĕнчи чи лайăх муниципаллă служащийĕ» конкурс ирттерет. Çакă асăннă ĕçпе çыхăннисен ятне-сумне ӳстерессипе, вĕсен професси ĕçне-хĕлне тивĕçлипе хаклассипе çыхăннă.

Конкурса хутшăнас текенсенчен кирлĕ документсене район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пайĕнче ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ноябрĕн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Саламлатпăр



Юратнă аннене, кукамая, асаннене, хунямана – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Ирина Дмитриевна АЛЕКСЕЕВĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, пархатарлă кун-çул, çăл куç пек тапакан вăйхал сунатпăр. Эсĕ пурри – пирĕншĕн пысăк телей.

**Саламлаканĕсем: 2 хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем.**



Юратнă аннене, хаклă хунямана, ырă кăмăллă асаннене – Катькас ялĕнче пурăнакан **Евстолия Георгиевна СЕРОВĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, савăнăç, вăрăм кун-çул, ăнăçу сунатпăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем тата ултă мăнукĕ.**



Чи хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, хунямана, кукамая, асаннене, аппана, мăнака – Елача ялĕнче пурăнакан **Зоя Александровна ФЕДОРОВĂНА** 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Яланах сывлăхлă, хавас кăмăл-туйăмлă пулмалла пултăр. Кĕрекӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр. Вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: Яшковсен, Федоровсен, Кудряшовсен, Барсовсен, Владимировсен çемйисем.**

# Тăван шкулăм 125 çул тултарчĕ

Истори



Ноябрĕн 10-мĕшĕнче Сосновкăри Н.В. Никольский ячĕпе хисепленекен пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул 125 çул тултарчĕ. Çавна май кунта йышлăн пухăнчĕç: хăнасем, кунтан вĕренсе тухнисем тата ыттисем. Кашни килекене ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç уяв кĕрекине кил хуçисем. Кунта ăста та тăрăшуллă вĕрентекенсемпе пултаруллă вĕренекенсем пулни аван курăнчĕ: шкул ĕçхĕлне туллин çутатакан самантсем, ал ĕçĕсем, йĕркелавра илемлĕ ешерекен чечексем.

Савăнăçлă уява пухăннисене асăннă шкул ертӳçи И. Федотова саламларĕ, шкул историйĕпе, кунти ĕçхĕлпе паллаштарчĕ. Истори – ĕнерхи пурнăç, паянхи пуянлăх, апла пулсан ăна кашнин пĕлмелле.

1887 çулта Уйкас Янасал ялĕнчи Александр Невский чиркĕвĕ çумĕнче тăватă çул вĕренмелли икĕ класлă шкул уçăлнă. Чи малтанах вара кунта 10 арçын ача çӳреме тытăннă. Вĕренĕвĕн пĕрремĕш тапхăрĕ арифметика тата чăвашла çырма, вулама вĕреннинчен пуçланнă. Çапах та тĕп вырăнта тĕн юррисемпе саккунĕсем пулнă. Ăна кашни вĕренекенĕн пĕлмелле – çакă чи пĕлтерĕшли. Чиркӳ çумĕнчи шкулта В. Громов священник вĕрентнĕ.

1912 çулта Исетерккĕре шкул уçăлать. 1986 çулччен Исетерккĕри пуçламăш шкул Сосновка шкулĕн филиалĕ ятпа вăйра тăрать.

1917 – 1918 çулсенче Купăрля ялĕнчи шкул хута каять. Çапла вара пуçламăш пĕлӳ çăл куçĕсем пĕрин хыççăн тепри уçăлаççĕ. Çакă йăлтах хутла вĕрентессишĕн çунакан, чăваш халăхне тĕттĕмлĕхрен çутта кăларассишĕн ăнтăлакан çынсен тимлĕхĕпе вăя кĕме пуçлать.

Арсентий Терентьевич хăйĕн çуртне шкул валли уйăрнă. Пĕчĕк çуртра вырăн çитменнипе 1921 çулта Н. Никольский хăйĕн ашшĕн çуртне вĕренекенсем валли уйăрать. Çавăн пекех чăваш халăхне çутта кăларассишĕн çунакан Николай Васильевич вĕрентӳ ĕçĕ валли методика пособийĕсемпе пулăшать. Кунта унăн майсем ытларах пулнă: вăл тĕрлĕ ăсчахпа чылай ĕçленĕ, хуласенчи вĕрентӳ учрежденийĕсенче пулнă, нумай пĕлнĕ тата курнă. Май пур таран шкула ытти енĕпе те пулăшнă. Кунти ĕç-хĕле Юркки Иванĕ ертсе пынă. Пĕрремĕш вĕрентекен унăн мăшăрĕ Людмила Петровна пулнă. 1923 çулта вара вĕсем урăх тăрăха куçнă май кунти ĕçрен уйрăлнă. Хисеплĕ мăшăр хыççăн Ефимовсем çакăнти ĕçе кӳлĕннĕ.

Пионер организацийĕ те ĕçлеме пуçлать. 1923 çулта кунта каярах пысăк пултарулăхпа палăрнă ачасем вĕреннине асăнса хăвармалла. Вĕсем хушшинче Сосновка шкулĕнче 42 çул хушши ачасене вĕрентнĕ И. Николаев, Шупашкарти ача-пăча театрĕнче ĕçленĕ А. Ильин, ял Канашĕн тата тăван хуçалăх ертӳçинче тăрăшнă, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕ И. Илларионов, çĕнĕ пурнăç тĕрĕслĕхĕшĕн, ăна вăя кĕртессишĕн пуç хунă А. Анисимов пулнă.

Каярах шкул ĕçĕ тепĕр пусăм çӳлелле улăхни курăнать. Халĕ вăл сичĕ çул вĕренмелли шкул ĕнтĕ. Ку 1948 çулта пулнă. Унти ĕçе 1957 çулччен А. Кротов ертсе пырать. 1958 çулта вара Сосновка ялĕнче шкул хута каять. Район администрацийĕн пуçлăхĕн В. Вязовăн йышăнăвĕпе 2003 çулта асăннă шкул ĕçĕ Вăскассинчи вĕрентӳпе культура центрне куçать.

Валерий Иванович юбилейпа саламланă май çак центра ĕçе кĕртессипе тимленине аса илчĕ. Коллектива ăнăçу сунчĕ.

– Шкул аталанăвĕ ӳсĕм хыççăн ӳсĕм туни аван курăнать. Çакă вара сирĕн ĕçре чикĕ ан пултăр, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Л. Тарасова.

Халĕ вăл Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн Николай Васильевич Никольский ячĕпе вăйра тăрать.

– Сумлă ентешĕмĕрĕн сӳнми ячĕ – ăнăçлă малашлăх хавхалантарăвĕ. Çакă пире пысăкрах çитĕнӳсем тума хистет, – терĕ Муркаш район пуçлăхĕ, депутатсен районти Пухăвĕн ертӳçи, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçи, Сосновка шкулĕнчи попечительсен канашĕн ертӳçи тата çак шкултан вĕренсе тухнă И. Николаев.

Кунта пĕлӳ пухнисем районпа республикăра çеç мар, Раççей шайĕнче те палăрма пултарчĕç. Паянхи вĕренекенсем Интернет-конференцисене, семинарсене, тĕрлĕ конкурссене хутшăнаççĕ.

– Шкул аталанăвĕ пĕр вырăнта тăмасть. Сирĕнтен тĕслĕх илмелли те пур. Çитĕнĕвĕре вара 2011 – 2012 вĕренӳ çулĕнче районти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăнни те çирĕплетет, – терĕ район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова.

Кунти кашни самант ачалăхпа çыхăннă. Çак тапхăр вара – чи савăкки. Шкул уявне тивĕçлĕ канăва тухнă хисеплĕ ветерансем те йышлăн пухăнчĕç. Аса илӳ çăмхи вара чылайччен тăсăлчĕ.

– Эпĕ хам та кунта чылай çул ĕçленĕ. Кашни вĕрентекен пысăк тавра курăмлă ачасем ӳстерессишĕн нумай тăрăшать. Кунта кружоксем, элективлă курссем хушма занятисем, ăс-тăн марафонĕсем иртерни тата ытти те – йăлтах пĕрлехи ĕç кăтартăвĕ, – терĕ Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Никифорова уявпа саламланă май. Уяв вăл – парнесем, вĕçсĕр-хĕрсĕр ырă сăмахсем, юрă-кĕвĕ. Кунта вара вĕсем çителĕклех пулчĕç.

Эпĕ хам та çак шкулта вĕреннĕ. Самантпа усă курса чи малтанах З. Ильина, Е. Николаева, З. Антонова, В. Антонова, Г. Платонов, Л. Ильина учительсене тата ыттисене те пысăк тав сăмахĕ калатăп. Сирĕн ырă ĕçĕр, ырми-канми тăрăшулăхăр кашни вĕренекен асĕнче.

**Сăн ӳкерчĕкре: Алиса Иванова, Зинаида Антонова, Ангелина Белова вĕрентекенсем (сылтăмран сулахаялла).**

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Паян – Сахăр диабечĕпе кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун

# Сахăр диабечĕпе чирлени алă усмаллине пĕлтермест

***Паян çĕр çинче миллионшар çын диабетпа чирлет. Вĕсем тулли пурнăçпах пурăнаççĕ. Çак чир çинчен тĕплĕнрех пĕлес тесе эпир Муркашри тĕп больницăн эндокринолог врачĕпе Татьяна ШАРИКОВĂПА тĕл пулса калаçрăмăр.***

**– Татьяна Сергеевна, калăр-ха, мĕнле чир вăл сахăр диабечĕ?**

– Сахăр диабечĕ социаллă пĕлтерĕшлĕ чирсенчен пĕри пулса тăчĕ. Хальхи вăхăтра çак чирпе тĕнчере 366 миллион çын чирлет. Раççейре диабетпа 3 миллион çын аптăрать, Чăваш Енре – 22 пин çын. Пирĕн районта вара паянхи кун тĕлне сахăр диабечĕпе чирлекен 440 çынна тупса палăртнă. Сахăр диабечĕпе чирлесси çултан-çул ӳссе пырать. Акă специалистсем шутланă тăрăх 2020–2030 çулсем тĕлне çак чирпе чирлекенсен шучĕ тĕнчере 552 миллионпа танлашма пултарать.

Мĕн-ха вăл диабет? Çын организмĕ хăй тĕллĕн инсулин кăларма пултарайманнипе (ачасен) тата ăна çителĕксĕр кăларса тăнипе (аслисен) пуçланать çак чир.

Инсулин гормонĕ (ăна хырăмай парĕ туса кăларать) çителĕксĕр пулнăран юнра сахăр нумайланнипе организмри веществосен ылмашăвĕ пăсăлать. Çакна сахăр диабечĕ тесçĕ.

Диабет икĕ тĕрлĕ пулать. Пĕрремĕшĕ – хырăмай парĕ пачах та инсулин туса кăларма пăрахать пулсан. Çакна инсулина пăхăнса тăракан сахăр диабечĕ тесе калаççĕ. Унпа чирлисем хушшинче ытларах 35 çула çитменнисем тĕл пулаççĕ. Вĕсем типшĕмрех кĕлеткеллĕ. Чир тăрук пуçланать те çавăн пекех хăвăрт сывлăха хавшатать. Çыннăн йывăрăшĕ чакма пуçлать, час-часах çăмăллипе тула каяс килни палăрать. Вăй чакать, чирлĕ çын пĕрмай выçă пулнине тата шыв ĕçес килнине сисет.

**– Иккĕмĕш тĕсĕ вара?**

– Диабетăн иккĕмĕш тĕсĕ – инсулина пăхăнман сахăр диабечĕ. Ытларах чухне (90 процент майлах) шăпах çак тĕс тĕл пулать те. Хырăмай парĕ (поджелудочная железа) инсулин çителĕксĕр туса кăларать е организм çак инсулин çине нимĕнле реакци те памасть. Диабетăн çак тĕсĕпе чирлекеннисем нумай чух 45 çултан иртнисем. Вĕсен кĕлетке йывăрăшĕн виçи ытлашши пулма тата ку пулăм çемьере те йăхран йăха куçса пыма пултарать. Нумайăшĕ чир паллисене туймасть, çавăнпа та диабета тупса палăртма тӳрех пулмасан та пултарать. Шыв ĕçес килни, час-часах пĕчĕккипе тула кайни, куç япăх курма пуçлани, алăсемпе урасем «сывăрса ларни» е кĕçĕтни, е тата тирсе илни, ӳт çинчи сурансем япăх тӳрленни – çаксем пĕтĕмпех инсулина пăхăнман сахăр диабечĕн паллисем. Çак чире тата час-часах урăх чире сипленĕ чухне те тупса палăртаççĕ.

Енчен те эсир диабетăн иккĕмĕш тĕсĕпе чирлĕ пулсан ятарлă апатлану режимĕ пулмалла, тĕрлĕ хусканусем тумалла. Кĕлетке йывăрăшĕн виçине чакарассине те, эмел ĕçессине те контрольлемелле.

**– Сывă çыннăн юнĕнче сахăр виçи мĕнле пулмалла-ха?**

– Сывă çыннăн юнĕнче сахăр виçи апат çиес умĕн 3,3–5,5 ммоль/л, апат çинĕ хыççăн икĕ сехетрен 5,6–7,8 ммоль/л пулмалла. Чирлисене сипленĕ чухне шăпах çак виçесене тытса пырассине тĕпе хураççĕ.

**– Чире асăрхаттарма пулать пулĕ?**

– Чире асăрхаттарасси, паллах, питĕ пĕлтерĕшлĕ. Пурнăç йĕркине улăштарса диабета айккине ирттерсе яма та пулать. Ӳт-пӳ йывăрăшне пĕчĕклетессипе, тăтăшах хусканусем тăвассипе çине тăрса ĕçлемелле. Йĕркеллĕ апатланмалла: пылак, чустаран хатĕрленĕ тата çуллă апат вырăнне ытларах пахча çимĕç, улма-çырла, пăтă çимелле. Çакна аслă ӳсĕмрисен тата тăвансем хушшинче диабетпа чирлекенсем пуррисен уйрăмах çирĕп пăхăнмалла. Диабет чирĕпе чирлине палăртсан вара юнри сахăра, ӳт-пӳ йывăрăшĕн виçине чакарпа тата çакна пула ытти чирсем ан пулччăр тесе эмелпе сиплемелле те пулма пултарать.

Ӳт-пӳ йывăрăшĕн виçи пысăккисен, 40 урлă каçнă çынсен апат çиес умĕн тата çинĕ хыççăн юнри сахăра тĕрĕслесе тăмалла. Чирпе чирлес хăрушлăх татах та пур пулсан эндокринолог врачпа канашламалла.

Çапах та сахăр диабечĕпе чирлисем хăйсен сывлăхне контрольлесе тăраççĕ пулсан вĕсем чирлĕ марриснечен те нумайрах пурăнма пултараççĕ. Мĕншĕн тесен çак чир сахăр шайне, холестерин, юн пусăмне тĕрĕслесе тăнине, алкогольпе пируса пурнăçран кăларса пăрахнине тата сывă пурнăç йĕркине çирĕп ыйтать.

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

Ыран – Пирус туртнипе килĕшмен кун

# Пирус туртма пăрахас тесен

Пирус туртассипе туртас мар тени – кашнин хăйĕн ĕçĕ. Паллах, пирус туртман çынсен сывлăхĕ çирĕпрехри никама та иккĕлентермест. Апла пулсан çак сиенлĕ йăлана йышăнманни кашни çыннăнах пĕлтерĕшлĕ. Туртма пăрахас тесен чи малтанах харпăр хăйĕн çирĕп тĕллевĕ пулни кирлĕ.

Пирус тăртма пăрахас кăмăллисене вара акă мĕн сĕнесшĕн.

Хăвăра ĕненĕр: пурнăçри ывăрлăхсене эсир мĕнле çĕнтерме пултарнă, пирус туртма пăрахассине те çапла пурнăçа кĕртме пултаратăр.

Пирус туртма пăрахнин лайăх енĕсем мĕнле пулассине хут çине çырса хума та пултаратăр: нумайрах пурăнасси, хăвăра сывлăхлăрах туясси, çемьене сиен кӳменни, укçа-тенкĕ енчен перекет пулни тата ытти те. Çак хут кашни кунах куç тĕлне лектĕр.

Çывăх çыннусемпе юлташсене туртма пăрахма шухăшланине пĕлтерĕр. Мĕншĕн тесен çак тапхăрта эсир вĕчĕрхенӳллĕрех пулма пултаратăр.

Хăш кун туртма пăрахассине малтанах палăртса хурăр. Унччен вара спорт занятийĕсене тăтăшах çӳрĕр е хăвăр тĕллĕн тăтăшах тĕрлĕ хусканусем туса ирттерĕр. Ирсерен зарядка тумалла. Çакă пĕтĕмпех стресс пуласран сыхлать.

Кунне пĕр-икĕ хутчен уçăлса çӳремелле. Çав вăхăтра сывлава йĕркелессипе 3–5 минут тарăннăн сывламалла.

Туртас тенĕ пирус шутне чакарса пымалла. Палăртнă кун тĕлне унăн шучĕ нульпе танлаштăр.

Хăвăр пирус пачкине урăх çынна парăр. Туртас тенĕ чух сирĕн пĕрмай çынран ыйтмалла пултăр.

Туртма пăрахас шухăшлă тепĕр çынна тупма пултаратăр. Пĕрле – çăмăлрах, тупăшуллăрах.

Пирус туртма пăрахнă вăхăтра шăлсем çине уйрăмах тимлĕ пăхăр: вĕсем шуралса пыраççĕ. Тепĕр уйăхран вара вĕсем чылай илемлĕрех пулĕç.

Шутланине пурнăçа кĕртсе пыратăр пулсан эрнесерен е уйăхсерен хăвăра валли пĕчĕк парнесем те тума пултаратăр.

Шыв нумай ĕçĕр. Вăл организмри никотина кăларма пулăшать.

Кашни çулах çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакан миллионшар çын туртма пăрахать. Вĕсем пултарнă, эсир те пултаратăр!

**Районти тĕп больницăра ыран, ноябрĕн 15-мĕшĕнче, Пирус туртнипе килĕшмен пĕтĕм тĕнчери куна халалласа уçă алăксен кунĕ иртет. Кăмăл тăвакансене пурне те кĕтетпĕр.**

**Л. ИВАНОВА,**
**нарколог врач.**

# Тренккăра вăй виçрĕç

Спорт

Ильинка ял тăрăхĕнче «Пысăк Атăл» спорт ăмăртăвне кунта çĕнĕ шкул тунăранпах, 1982 çултанпа ирттереççĕ. Шăмат кун, ноябрĕн 10-мĕшĕнче, çак ăмăрту волейбол, шахмат вăййисене тата сĕтел çи теннисне кăмăллакансене каллех пĕрле пухрĕ.

Ăмăртусене хутшăнма Тренккăна пурĕ 7 команда килсе çитрĕ: Ильинкăри, Оринринти, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулсен, «Оринино» хуçалăхăн, Шупашкарти 14-мĕш училищĕн командисем, «Шупашкарти ОМОН» тата «Муркаш» командăсем. Ăмăртăвăн кашни енĕпех интереслĕ те хĕрӳ тупăшусем пулчĕç. «Пысăк Атăл» пирки тĕплĕнрех çитес номерте çырса парăпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Извещение о проведении аукциона на право заключения договоров купли-продажи земельных участков

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе, открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи (далее - аукцион) земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 29.10.2012 №939. Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: imu4@morgau.cap.ru, http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71.

**Характеристика объектов купли-продажи:**

**Лот №1** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:092701:1063**, категории «земли сельскохозяйственного назначения», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 1551 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 66073 (шестьдесят шесть тысяч семьдесят три) рубля.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (13214 руб. 60 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (3303 руб. 65 коп.)

**Лот №2** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:092701:1064**, категории «земли сельскохозяйственного назначения», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 1129 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 48095 (сорок восемь тысяч девяносто пять) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (9619 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (2404 руб. 75 коп.)

**Лот №3** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:092701:1065**, категории «земли сельскохозяйственного назначения», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 2500 кв. м

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 103050 (сто три тысячи пятьдесят) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (20610 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (5152 руб. 50 коп.)

**Лот №4** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:260102:188**, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Изедеркино, ул. 30 лет Победы, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1396 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 28760 (двадцать восемь тысяч семьсот шестьдесят) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (5752 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (1438 руб. 00 коп.)

**Лот № 5** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:050301:263**, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большое Карачкино, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2567 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 42050 (сорок две тысячи пятьдесят) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (8410 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (2102 руб. 50 коп.)

**Лот №6** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:160303:199**, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Красная Площадь, для строительства и обслуживания гаража, площадью 32 кв.м.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 15017 (пятнадцать тысяч семнадцать) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (3003 руб. 40 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (750 руб. 85 коп.)

**Лот №7** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:100801:43**, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Оринınское сельское поселение, д. Басурманы, ул. Главная, уч-к 55, для индивидуального жилищного строительства, площадью 4000 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 119600 (сто девятнадцать тысяч шестьсот) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (23920 руб. 00 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (5980 руб. 00 коп.)

**Лот №8** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:060401:1142**, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Советская, для строительства и обслуживания бани, площадью 68 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 12014 (двенадцать тысяч четырнадцать) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (2402 руб. 80 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (600 руб.70 коп.)

**Лот №9** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:091501:74,** категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Максикасы, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1979 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 60043 (шестьдесят тысяч сорок три) рубля.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (12008 руб. 60 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (3002 руб.15 коп.)

**Лот №10** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:060402:270**, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Советская, для строительства и содержания административного здания, площадью 1052 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 12088 (двенадцать тысяч восемьдесят восемь) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (2417 руб. 60 коп.)

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка (604 руб.40 коп.)

Информация о проведении аукциона. Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810975025013001 в Чувашском отделении №8613 ОАО «Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 5 банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц.

4. Физическое лицо предъявляет документ, удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность.

5. Юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица, а также выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент) (кроме участия в аукционе на право заключения договора купли-продажи земельного участка для индивидуального жилищного строительства).

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах.

Сроки приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 14 ноября 2012г. по 17 декабря 2012г.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе. С документацией об аукционе, в том числе с формой заявки и проектом договора купли-продажи земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №312.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров купли-продажи земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании Комиссии - 18 декабря 2012 г. в 16.00 часов по адресу организатора аукциона. Ознакомление с земельным участком на местности: в рабочее время по предварительному согласованию с представителем отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену приобретения в собственность земельного участка. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи земельного участка. Договор купли-продажи земельного участка заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

Определение участников аукциона состоится 19 декабря 2012 г. по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, 3 этаж, каб. 312. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1- 9.00, Лот №2 – 9.20, Лот №3 – 9.40, Лот №4 – 10.00, Лот №5 – 10.20, Лот №6 – 10.40, Лот №7 – 11.00, Лот №8 – 11.20, Лот №9 – 11.40, Лот №10 – 13.00

## Прогноз погоды

| | среда 14 ноября | | | | четверг 15 ноября | | | | пятница 16 ноября | | | | суббота 17 ноября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +1 | 0 | -2 | -3 | -3 | -1 | 0 | +2 | +2 | +4 | +2 | +1 | 0 | 0 | -1 | -2 |
| Давление мм | 746 | 747 | 747 | 746 | 746 | 745 | 741 | 741 | 740 | 738 | 738 | 739 | 742 | 745 | 748 | 749 |
| Влажность % | 91 | 82 | 73 | 82 | 83 | 84 | 100 | 96 | 99 | 97 | 96 | 93 | 92 | 81 | 87 | 88 |
| Ветер м/сек | 6 | 8 | 7 | 6 | 5 | 3 | 4 | 4 | 4 | 7 | 6 | 5 | 6 | 6 | 4 | 4 |
| | З | С-З | З | З | С-З | Ю-З | Ю-З | З | З | З | З | С-З | С-З | С-З | С-З | С |
| Солнце восход / заход | | 08:28 | 16:46 | | | 08:30 | 16:44 | | | 08:33 | 16:42 | | | 08:35 | 16:41 | |
| Луна восход / заход | | 09:00 | 17:02 | | | 10:16 | 17:57 | | | 11:18 | 19:05 | | | 12:05 | 20:23 | |

**Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FULL и HD. Триколор 7300 руб. Телекарта 3000 руб. с. Моргауши. Тел.: 8-906-385-29-30. 5-10.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-10.**

## Тав тăватпăр

Пирĕн хуçалăхра çав тери пысăк хуйхă пулчĕ – малтанхи кунсенче кăна çĕкленĕ, кĕç-вĕç пурăнма куçмалли çĕнĕ пӳрт кĕске вăхăтра çунса кĕлленчĕ, кăшкарĕ кăна юлчĕ. Хĕле хирĕç нимсĕр тăрса юлтăмăр тата çак таранччен тăрăшни йăлтах харама кайрĕ. Кун пек вăхăтра вара пĕччен-иккĕн нимĕн те тăваймăн. Юрать-ха пирĕн хуйха ăнланса пулăшас текенсем тупăнчĕç. Вуткăвар сӳнтерме, ытти ĕçе йĕркелеме хутшăннисене пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Пирĕн вара епле пулсан та малаллах пурăнмалла, çурт-йĕре çĕнĕрен çĕклемелле. Кунта чи малтанах Ильич яч. хис. хуçалăха, Уйкас Янасал ял тăрăхĕн администрацине, ку тăрăхри ырă кăмăллă çынсене пире укçа-тенкĕпе, ытти мелпе пулăшнисене чĕререн тухакан сăмахсемпе тав тăватпăр, ырри ыррипех таврăнтăр.

**Сире пурне те тав туса Купăрляри Степановсен çемйи.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 1-10.**

**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**Осенняя распродажа: мотоблоки, мини-тракторы, навесное оборудование, снегоуборочная техника, запчасти, ремонт. Тел.: 8-967-470-31-43. 4-12.**

**Продается черно-пестрая корова, 6 отел в июне.
Тел.: 8-905-197-85-73. 3-3.**

* * *

**Çичĕ уйăхри хура вăкăр сутатăп.
Тел.: 8-927-854-87-82.**

* * *

**Февраль уйăхĕнче ултăмĕш пăруламалли хăмăр тĕслĕ сĕтлĕ ĕне сутатăп. Çĕньял Апаш ялĕ, Озерная урам. 15-мĕш çурт.**



**16 ноября в Б. Сундырской библиотеке с 8.00 час. до 16.00 час. состоится выставка-продажа обуви Ульяновской, Белорусской и др. российских обувных фабрик из натуральной кожи, а также выставка-продажа трикотажных изделий. 1-5.**

* * *

**Продаем кирпичный дом с надворными постройками (газифицирован), трактор Т-16 м, культиватор-окучник навесной КОН-2.8, культиватор навесной КПН-4, косилку сегментную КС-2,1.
Тел.: 8-967-473-34-47, 8-937-370-63-32.**

* * *

**Продаю горох, солому, мелкий картофель.
Тел.: 8-927-847-20-55, 8-952-021-75-90.**

* * *

**Продается трактор МТЗ-80 1989 года выпуска, в отличном состоянии, с двухкорпусным плугом. Цена договорная. Тел.: 8-953-011-69-79, 8-965-686-03-07.**

* * *

**Продаются: крупные племенные гуси, можно тушками; кролики ризен; щенки немецкой овчарки. Также на продажу ноутбук DELL, МФУ Canon, автомобиль Приора хэтчбек недорого. Тел.: 8-927-66-55-900. 1-2.**

* * *

**Тăваттăмĕш пăрулана шурă-хура тĕслĕ ĕне сутатăп.
Тел.: 8-927-862-85-83.**

* * *

**Февралĕн 3-мĕшĕнче улттăмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-905-341-62-39. 1-2.**

Коллектив СХПК им. Чкалова выражает глубокое соболезнование родным и близким Иванова Юрия Александровича, заведующего допофисом № 8613/039 Чувашского отделения № 8613 ОАО «Сбербанк России», в связи с постигшей вас и вашу семью невосполнимой утратой – кончиной матери

**ИВАНОВОЙ
Раисы Еремеевны.**

СХПК ПЗ им. Е. Андреева выражает глубокое соболезнование Иванову Ю.А., заведующему допофисом № 8613/039 Чувашского отделения № 8613 ОАО «Сбербанк России», в связи со смертью матери

**ИВАНОВОЙ
Раисы Еремеевны.**

Коллектив филиала ФБУЗ «Центра гигиены и эпидемиологии в ЧР-Чувашии в г. Новочебоксарске» Моргаушского района выражает искреннее соболезнование коллеге Семеновой Л. в связи с тяжелой утратой – кончиной

**ОТЦА.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви**

**ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 13.11.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4689.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.